26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ФЕВРАЛЬ 18 ЭРНЕКУН 34 (6529) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне КОНЕВА

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, пĕр чарăнмасăр 14 кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн, февралĕн 17-мĕшĕнче, нимĕçсен КОРСУНЬ-ШЕВЧЕНКОВСКИЙ районĕнче хупăрласа илнĕ вунă дивизине тата тăшманăн 8-мĕш армийĕн пĕр бригадине пĕтерсе тăкмалли операцие вĕçленĕ.

Çак операци вăхăтĕнче çапăçу хирĕнче тăшманăн 52 пин вилли вырта юлнă. Нимĕçсен 11 пин салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă.

Пирĕн çарсем тăшманăн мĕнпур техникипе хĕçпăшалне тытса илнĕ.

Çапăçусенче ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантăн, СМИРНОВ генерал-лейтенантăн, КОРОТЕЕВ генерал-лейтенантăн çарĕсем, СЕЛИВАНОВ генерал-лейтенантăн кавалерисчĕсем, танковăй çарсен генерал-полковникĕн РОТМИСТРОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн КИРИЧЕНКАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ПОЛОЗКОВАН танкисчĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн ГОРЮНОВАН летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене «КОРСУНЬСКИ» тесе ят памашкăн тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 18-мĕшĕнче, 1 сехетре, пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, нимĕçсен хупăрласа илнĕ çарĕсене пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçленĕ УКРАИНАРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронтăн çарĕсене, КОРСУНЬ патĕнчи çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП, çавăн пекех арми-генералне КОНЕВА, нимĕçсен хупăрласа илнĕ çарĕсене пĕтерсе тăкмалли операцие питĕ пысăккăн, хăйне уйрăмăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн те никама пăхăнманлăхĕшĕн пырса çапăçура вилнĕ геройсене ĕмĕрĕн-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1944 çулхи февралĕн 18-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем ГДОВ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, тата унăн контратакисене сире-сире ярса, малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ. Вăл шутра—САМОЛВА, ЧУДСКИЕ ЗАХОДЫ, ЛЮБОТЕЖ, ДУДИНО, МОШНИНО, БАРАНОВО ялĕсем тата ЯММ чугун çул станцийĕ.

ЛУГА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—ОВИНЕЦ, ЛЫШНИЦЫ, МАЛОЕ ЗАХОНЬЕ, БОРКИ, ОЗЕРЦЫ, КРЕНИ, ЗАМОШЬЕ ялĕсем тата ЛЯМЦЕВО чугун çул станцийĕ.

ЗВЕНИГОРОДКА хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерессишĕн ăнăçлă çапăçнă, çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, тăшман оборонин вăйлă сирĕплетнĕ ЯБЛОНОВКА, ДАЦКИЙ, ПРУТИЛЬЦЫ, ТАРАЩА ятлă тĕреклĕ пункчĕсене туртса илнĕ. Тăшман çавăрса илнĕ унка татма темиçе хутчен те хăтланса пăхнă, анчах та ăна кашнинчех каялла ывăта-ывăта янă. Çав çапăçусенче нимĕçсене çынсем тĕлĕшпе питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем ЗВЕНИГОРОДКĂРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пулăшмашкăн хĕсĕнсе кĕме хăтланнă нимĕçсен пехотипе танкĕсен контратакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе миномет-сем персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 128 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 23 самолетне персе ӳкернĕ.

Арми генералĕ И. С. КОНЕВ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

Февралĕн 16-мĕшĕнче, Шупашкар хулинче, Советсен Çуртĕн ларусем пулакан залĕнче, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ уçăлчĕ. Канашлăва Мари тата Мордва республикисенчен килнĕ делегацисем, республика столицинчи фабрикăсемпе заводсенчи стахановецсем, çар чăçĕсен представителĕсем тата республикăри партипе совет организацийĕсен руководителĕсем те пынă.

Канашлăва Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ **А. М. Матвеев** юлташ уçрĕ.

Канашлу ĕçлĕ президиум суйлать, унăн составĕнче—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ **Чарыков** юлташ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **Андреева** юлташ, Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ **Матвеев** юлташ, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕсем: **Белков, Андреев, Лисин, Иванов** юлташсем, Чăваш АССР Совнарком Председателĕн Заместителĕ **Семенов** юлташ, Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ **Белолипецкий** юлташ, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ **Малов** юлташ, Мари АССР делегацийĕн руководителĕ **Дыганов** юлташ, Мордва АССР делегацийĕн руководителĕ **Исеев** юлташ, ялхуçалăхĕнче малта пыракансем.

Канашлу пысăк çĕкленӳпе тата тăвăллăн алă çупса хисеплĕ президиума Верховный Главнокомандующине, Совет Союзĕн Маршалне асла **Сталин** юлташа тата унăн соратникĕсене—**Молотов, Ворошилов, Калинин, Андреев, Каганович, Жданов, Микоян, Хрущев, Берия, Маленков, Вознесенский, Щербаков, Шверник** юлташсене суйлать.

Канашлу çакăн пек кун йĕрки çирĕплетет:

1. 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата кăçалхи çуракине хатĕрленес задачăсем çинчен;

2. 1944-мĕш çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен государство планне чи лайăх пурнăçлассишĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн Марипе Мордва АССР-ĕсемпе социализмлă ăмăртăва тухмалли обязательствосене йышăнасси.

Пĕрремĕш ыйтупа — 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата кăçалхи çуракине хатĕрленес задачăсем çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш Секретарĕ **И. М. Чарыков** юлташ доклад туса пачĕ.

Чарыков юлташăн доклачĕ тăрăх пренисем пуçланчĕç. Пренире çак юлташсем тухса каларĕç: **Данилов** юлташ (Куславкка районĕнчи «Красноармейск» колхозран), **Соловьев** юлташ (Сĕнтĕр районĕнчи Орининори «Красное Сормово» колхозăн ферма заведующийĕ), **Кухарский** юлташ (Етĕрнери лаша завочĕн директорĕ), **Кузьмин** юлташ. (Етĕрне районĕнчи «Сура» колхозăн ферма заведующийĕ), **Васильев** юлташ (Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхозри овощевод), **Пигасов** юлташ (Шăхасан районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхозри ферма заведующийĕ), **Андреев** юлташ (Советски районри «Сеятель» колхоз председателĕ), **Захаров** юлташ (ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ), **Николаев** (Калинино районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ), **Семьянов** юлташ (Вăрнарти зооветтехникум директорĕ), **Малов** юлташ, (Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ) тата ыттисем те тухса каларĕç.

Канашлу участникĕсем пысăк хаваслăхпа, тăвăллăн алă çупса Верховный Главнокомандующи, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсенчи работниксене тата ялхуçалăхĕнчи специалистсем патне чĕнсе çырнине тата 1944-мĕш çулта ялхуçалăх ĕçĕсен государство планне чи лайăх пурнăçлассишĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн Марипе Мордва АССР-ĕсемпе социализмлă ăмăртăва тухса Чăваш АССР-ĕ хăй çине илнĕ обязательствăсене йышăнчĕ.

Енер каçхине ялхуçалăхĕнчи малта пыракансен канашлăвĕ хупăнчĕ

1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата кăçалхи çуракине хатĕрленес задачăсем çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ тунă докладран

Отечественнăй вăрçă колхоз хресченĕсем умне питех те пысăк ыйтусем лартрĕ. Хĕрлĕ Çара, промышленноçа тата халăха тырă, пахча-çимĕçсем, çĕрулми, йĕтĕн, махорка тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсем те нумай кирлĕ. Тăван çĕршыв интересĕсем ялхуçалăх продукчĕсем тăвассине пĕрмай ӳстерсе пыма хушаççĕ, унсăрăн вăрçăра çĕнтерме май çук.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, Чăваш республикинчи колхозсем 1943-мĕш ялхуçалăх çулне нихăçанхинчен те лайăхрах, организованнăрах ирттерчĕç. Çуракине 1942 çулхинчен 12 кун маларах туса пĕтернĕ, тырпулсем акмалли плана 18.866 гектар чухлĕ ирттерсе тултарнă. Кĕрхи тырăсене те планран 9000 гектар чухлĕ ирттерсе акнă. Тырпулсене уйхиртен пухса кĕртес ĕçе вăрçăччепхи 1940 çулхинчен пĕр уйăх маларах вĕçленĕ. Республикăри колхозсем октябрĕн 26-мĕшĕнче авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă парас ĕçе ноябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне, урăхла каласан, иртнĕ çулхинчен виçĕ уйăх маларах пурнăçа кĕртнĕ. Унсăр пуçне, колхозсем МТС-сен 1944 çулхи ĕçĕсемшĕн натуроплата шучĕпе тата Хĕрлĕ Çарăн тырпул фондне 105.000 пăт тырă панă. Аш-какай хатĕрлемелли плана та срокчен тултарнă, государствăна 1942 çулхинчен 207.314 пăт ытларах аш-какай панă.

Çуракине ăнăçлăн ирттерсе тата акса хăварнă тырпулсене лайăх пăхса ӳстерсе, колхозсем 1943 çулта начар мар тырпул туса илчĕç. Иртнĕ çулта республика тăрăх, вăтамран шутласан, гектартан 12,2-шер центнер тырă туса илнĕ.

Вăрнар, Калинино, Етĕрне, Шупашкар, Шăхасан тата Сĕнтĕр районĕсем республикăри вăтам хисепрен те вăйлăрах тырпул туса илнĕ.

Республикăри темиçе çĕр колхоз вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек вăйлă тырпул туса илчĕç. Çапла, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Зайцев юлташ) вăтам шутпа гектартан 16-шар центнер тĕштырă туса илнĕ. Вăрмар районĕнчи «Красные Мураты», Советски районри «Сеятель» колхозсем гектартан 15-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз гектартан 14,5-шер центнер тырă илнĕ, уйрăммăн каласан, 140 гектар çинчи кашни гектартан 18-шар центнер тулă тата 5 гектар çинчен 700-шер центнер выльăх кăшманĕ туса илнĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «КИМ» колхоз колхозникĕсем вăрлăх участокĕнчи кашни гектартан 32-шер центнер урпа, 18,5-шер центнер сĕлĕ туса илнĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем, отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи чаплă çĕнтерӳсемпе тата Верховный Главнокомандующин, Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн историллĕ приказĕсемпе хавасланса, вăйсене икĕ-виçĕ хут ӳстерсе ĕçлерĕç. Тырпулсене пухса кĕртнĕ тапхăрта республика уйхирĕсенче темиçе пин стахановец палăрчĕ. 1905 çулхи революци ячĕпе тăракан колхозри (Сĕнтĕр районĕ) Мария Гусева, Зоя Кăшина тата Анастасия Балуева колхозницăсем кунсерен çурлапа 0,42-шер гектар тырă вырни пуриншĕн те паллă ĕнтĕ. Шăмăршă районĕнчи «Сталь» колхозри машиновед—отечественнăй вăрçă инваличĕ Вахитов юлташ хăйпе улшăнса ĕçлекенпе пĕрле куллен жнейкăпа 10-шар гектар тырă вырнă. Шупашкар районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри çулакансем Кузьминăпа Андреева юлташсем кашни кун 0,5-шер гектар çулнă.

Пирĕн колхозниксен стахановла ĕçĕ, çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, уборка ĕçĕсене организованно тата кĕске срокра пурнăçа кĕртме май пачĕ.

Тырă вырас ĕçе 1942 çулта 65 кунта, 1940 çулта 60 кунта вĕçленĕ пулсан, иртнĕ çулта вара 45 кун хушшинче вĕçленĕ. Палăртас пулать, комбайнсемпе тата лашасемпе ĕçлемелли машинăсемпе лайăхрах усă курнă пулсан, уборка ĕçĕсене татах та хăвăртрах вĕçлеме пулнă пулĕччĕ.

Анчах та уйрăм районсем уборка ĕçĕсене хăвăртлатас тĕлĕшпе кирлĕ таран тăрăшман, çапла вара тырпулсене пуçтарса кĕрес ĕçе вăраха янă, тăкаксем чылай тунă. Çапла, Пăрачкав районĕнчи «Правда» колхозра тырăсене вăхăтра капана хывман пирки 40 гектар çинчи ыраша шăшисем кишĕклесе пĕтернĕ. Советски районри «Новый путь» колхозра кашни гектар çинче 2-шер центнер ытла тырă тăккаласа хăварнă. Шупашкар районĕнчи «Чуваш ЦИК» колхозра 400 пăт ытла ыраш тăккаласа пĕтернĕ.

Иртнĕ çулта тырпулсене капана хывас тата авăн çапас ĕçсем те лайăхрах пулса пычĕç. Тырпулсене капана хывас ĕç 1940 çулта 65 кун хушши, 1942 çулта 60 кун хушши пынă пулсан, 1943 çулта пĕтĕм тырпулсене 55 кун хушшинче капана хывса пĕтернĕ. Вăрнарпа Етĕрне районĕсем республикăра пуринчен малтан авăн çапса пĕтерчĕç. Палăртас пулать, авăн çапас ĕçе ăнăçлăн вĕçлеме Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх сентябрĕн 25-мĕшĕпе октябрĕн 25-мĕшĕ хушшинче ирттернĕ фронтовой уйăхлăх нумай пулăшрĕ. Фронтовой уйăхлăхра пĕтĕм тырпулсенчен 40 процентне çапса пуçтарнă.

Уборка ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлени государствăна ялхуçалăх продукчĕсем вăхăтра парса пĕтерме пулăшрĕ.

Государствăна тырă памалли плана срокчен тултарассишĕн тата Сталин юлташа чи малтан рапорт пама право илессишĕн Вăрнар районĕнчи малта пыракан колхозсен председателĕсем чĕннипе пуçланнă социализмлă ăмăрту 1943 çулта тырă хатĕрлес ĕçе хăвăртлатакан пысăк вăй пулса тăчĕ. Республикăри районсенчен нумайĕшĕсем чăн-чăнах фронта тивĕçлĕн ĕçлерĕç, вара республика тырă хатĕрлемелли плана срокчен, ноябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне, пурнăçа кĕртрĕ. Унсăр пуçне колхозсем государствăна аванс шучĕпе 1944 çулшăн 105.000 пăт тырă панă.

Çак ăмăртура Вăрнарпа Етĕрне районĕсем мала тухрĕç. Государствăна тырă парас ĕçе Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Канаш, Куславкка тата Калинино районĕсем те организованно ирттерчĕç.

Шăмăршă, Пăрачкав, Кувакино тата Чкаловски районсем тырă хатĕрленĕ вăхăтра пĕрмаях хӳрере çапкаланса пычĕç. Çав районсенче ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1943 çулта тырпулсене пуçтарса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пăсникисем те пулнă.

Пирĕн республика государствăна тырă сутас ĕçе ăнăçлăн туса ирттерчĕ. Колхозсемпе колхозниксем вунă кун хушшинче государствăна 2.500.000 пăт ытла тырă сутрĕç, вăл шутран колхозниксемпе колхозницăсем пĕр миллион пăт ытла сутнă. Государствăна сутнă тырра январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех Заготзерно пункчĕсене леçсе панă. Çак ĕçре Вăрнар, Калинино, Шăхасан, Вăрмар, Елчĕк тата ытти районсенчи колхозсем большевикла тимлĕхпе ĕçлерĕç.

Иртнĕ çулта пирĕн республика аш-какай, сĕт тата выльăх-чĕрлĕхсен ытти продукчĕсене хатĕрлес ĕçе те иртнĕ çулхинчен лайăхрах ирттерчĕ. Республикăри колхозсем государствăна аш-какай памалли плана октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç тата январĕн 1-мĕшĕ тĕлне аванс шучĕпе 1944 çулшăн 30.000 центнер аш-какай пачĕç.

1943 çулта çĕрулмипе пахча-çимĕçсем хатĕрлесси начар иртрĕ. Уйрăм районсем государствăна обязательнăй йĕркепе çĕрулми тата пахча-çимĕçсем памалли плана тултарса çитермен.

Махоркăпа техникăллă культурăсем хатĕрлесси те питĕ начар пырать. Апла пулин те çĕрĕç органĕсемпе колхоз руководителĕсем васкамаççĕ. Техникăллă культурăсем çине çавăн пек пăхнине халех пĕтермелле.

Вăрçă вăхăтĕнче машинно-тракторнăй станцисен вырăнĕ вăйлăн ӳсрĕ. МТС-сен уйрăм руководителĕсем ĕçе пĕлсе организацилерĕç, механизаторла кадрсен пĕлӳлĕхĕпе вĕсен пултарулăхĕпе анлăн усă курчĕç.

Анчах та МТС-сенчен нумайĕшĕсем машинно-тракторнăй паркпа кирлĕ пек усă курман, трактористсемпе МТС-сенчи ытти работниксене тракторсемпе тумалли ĕçсен планне тултарассишĕн кĕрешмешкĕн мобилизацилеме пултарайман. Çавна пула вара тракторсемпе тумалли ĕçсен планне пĕтĕм республикăпе 75,6 процент, тырпулсене комбайнсемпе пухса кĕртмелли плана 88,4 процент тата комбайнсемпе авăн çапмалли плана 56,3 процент çеç тултарнă. Уйрăмах çак МТС-сем начар ĕçленĕ: Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ хăйĕн планне 51,2 процент, Етĕрне МТС-ĕ—31,4 процент, Пăрачкав МТС-ĕ—54,8 процент, Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ—54,8 процент, Чкаловски МТС-ĕ—57,2 процент, Шăмăршă МТС-ĕ—60 процент, çеç тултарнă.

1943 çулта республикăра тракторсемпе тумалли ĕçсен планне çителĕксĕр пурнăçа кĕртни иртнĕ çулта нумай МТС-сем çуракине начар хатĕрленнинчен килнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтусем

ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышĕпе вĕсен тухăçлăхне ӳстерессе çинчен» йышăннă постановление пурнăçласа пырса, пирĕн республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне срокчен тултарнă: ĕнесемпе вăкăрсем енĕпе—114 процент, сысначем енĕпе—108,7 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе—112,2 процент.

Выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ 1943 çулта çакăн чухлĕ ӳснĕ: ĕнесемпе вăкăрсен хисепĕ—22,8 процент, сыснасен хисепĕ—4,3 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ—22,3 процент ӳснĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ĕнесемпе вăкăрсем енĕпе 25 район, сыснасем енĕпе 18 район, сурăхсем енĕпе 26 район, лашасем енĕпе 4 район çеç пурнăçланă.

Партипе правительство «Ялхуçалăх культурисемпе выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановлени выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçне лайăхлатма пулăшрĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ӳстернĕшĕн тата 1943 çулта çамрăк выльăхсене сыхласа хăварнăшăн республикăра 2.039 çынна ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ.

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе халех тумалли ĕçсем çинчен партипе правительство йышăннă постановление пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн республикăри колхозсем Орел, Смоленск тата Курск облаçĕсене 3050 сурăх, 3150 сысна тата 5000 хур янă.

Анчах та нумай районсем колхозниксемпе колхозницăсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма çителĕклĕ таран мобилизацилемен. Çавăн пирки колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Вĕсем халăх хуçалăхĕн çак питĕ кирлĕ отраçлĕне малалла аталантарса пыма кансĕрлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çак районсем тултарайман: ĕнесемпе вăкăрсем енĕпе — Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Чкаловски тата

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

И. М. Чарыков юлташăн доклачĕн вĕçĕ

Шăмăршă районĕсем; сыснасем енĕпе — Улатăр, Канаш, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Пăрачкав, Чкаловски, Шăмăршă, Елчĕк тата Тăвай районĕсем; сурăхсем енĕпе — Пăрачкав тата Шăмăршă районĕсем. Улатăрпа Шăмăршă районĕсенче выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ нумай чакнă.

Ама выльăхсене ĕрчетмелли плана питĕ начар пурнăçласа пыраççĕ. Çапла, плана ĕнесем енĕпе 95,6 процент çеç, сыснасем енĕпе 92 процент çеç тултарнă. Комсомольски, Пăрачкав, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай тата Шăмăршă районĕсенче ама выльăхсен хисепĕ ўсес вырăнне чакса пырать. Çав районсенчи колхозсен руководителĕсем ама выльăхсен хисепне ўстерни выльăх-чĕрлĕхсен хисепне малалла ўстерме кирлĕ никĕс пулса тăнине шута илмеççĕ, фермăсене ама выльăхсем кирлĕ чухлĕ тупса парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсен хисепне малалла ўстерес ĕçре çамрăк выльăхсене сыхласа хăварни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах та колхозсен чылай руководителĕсем çакна çителĕклĕ шута илмеççĕ, çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăвармалла кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Çавăн пирки 1943 çулта пирĕн республикăри колхозсенче тихасен 9 проценчĕ, пăрусен 15,5 проценчĕ, сысна çурисен 14,8 проценчĕ, путексен 11,4 проценчĕ вилнĕ. Кувакино, Первомайски, Шупашкар, Çĕмĕрле районĕсенче çамрăк выльăхсем уйрăмах нумай вилеççĕ.

Калас пулать, нумай районсенче выльăх вилни çинчен колхоз правленийĕсен ларăвĕсенче сўтсе-явмаççĕ, çавна пула выльăх вилнишĕн айăплă колхозниксем ответ тытасран пăрăнса юлаççĕ. Колхоз хуçалăхне сиен тунăшăн хытă айăпламалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тепĕр пысăк çитменлĕх вăл — выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноçĕ начарри пулса тăрать. Нумай колхозсен председателĕсем выльăх-чĕрлĕхсен хисепне çеç ўстерме тăрăшаççĕ, вĕсен тухăçлăхне ўстерме тăрăшмаççĕ. Иртнĕ çулта пирĕн республикăри колхозсем сăвакан кашни ĕне пуçне 1100-шер литр сĕт сăвас вырăнне 911-шер литр çеç суса илнĕ. Красноармейски районĕри колхозсем кашни сăвакан ĕнерен 654-шар литр, Шăмăршă районĕнчи колхозсем — 698-шар литр, Калинино районĕнчи колхозсем — 717-шер литр, Октябрьски районĕри колхозсем—719-шар литр çеç сĕт суса илнĕ. Çăм, çăмарта т. ыт. те илнине кăтартакан цифрăсем те пĕчĕккĕ.

Халĕ выльăхсем пăрулама, хăмлама, çăвăрлама пуçларĕç. Çамрăк выльăхсене лайăх кĕтсе илмелле, вĕсем валли юрăхлă çуртсем хатĕрлесе хумалла, вĕсене пăхма чи лайăх, чи опытлă колхозниксене уйăрса хумалла. Вĕсемшĕн тăрăшни, фермăн малашнехи пурнăçĕшĕн тăрăшни — выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес ĕçĕн ыранхи кунĕшĕн тăрăшни пулса тăрать.

Выльăх апачĕ çителĕклĕ пулмасан, обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетме çук. Çавăнпа пур колхозниксен те выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлеме тăрăшмалла. Пур колхозсенче те шултăра апатсене лайăхлатас, выльăхсене пăрса йышши культурăсен хывăхне, кантăрпа клевер хывăхне çитерес ĕçе организацилемелле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсем Тăван çĕршывпа фронт умĕнче экзамен тытаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пирĕн çĕнĕ пысăк çитĕнўсем тумалла.

Вăйлă тырпул туса илес тесен, агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртес пулать. Агротехника ĕçĕсене тĕплĕн туса пыракан колхозсем, вырăнти удобренисемпе усă курса, çулленех тĕштырăсем, техникăллă культурăсем, пахча-çимĕçсем тата çĕрулми нумай туса илеççĕ.

Иртнĕ çулта пирĕн республикăра уйхире 1942 çулхинчен 1,5 хут ытларах тислĕк тăкнă. Ку тĕлĕшпе кăçал та нумай ĕçлемелле пулать. Хĕл вăхăтĕнче пирĕн 1200 пин тонна тислĕк, 200 пин тонна торф, 80 пин центнер кĕл, 60 пин центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хире турттармалла, 150 пин гектар çинче юр тытмалла.

Совет тата парти органĕсен, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен мĕнпур колхозниксене тислĕкпе тата вырăнти удобренисемпе туллин усă курма çĕклемелле, мĕншĕн тесен удобренисемшĕн кĕрешни тырă тухăçлăхне ўстерессишĕн, пирĕн çĕршывăн апат-çимĕç запасĕсене ўстерессишĕн кĕрешни пулать. Çуракине тухиччен хире тислĕк кăлармалли плана кирек мĕнле пулсан та пĕтĕмпех пурнăçламалла.

Пирĕн республикăра юлашки çулсенче тĕштырăсен вутпуççине пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕç тунă. Анчах 1943 çулхи çуркунне уйрăм колхозсем чўхесе тасатман вăрлăхсем акнă, çавăн пирки тырăсем, уйрăмах сĕлĕ, вир тата тулă ытларах чирленĕ.

Çапла, акă, Канаш районĕнчи «Парижская Коммуна» колхозра чўхесе тасатмасăр акнă çурхи туллăн 23,6 проценчĕ вутпуççиллĕ пулнă. Çитес çуракинче чўхесе тасатман вăрлăх акма юрамасть.

1944 çулхи çуркунне пирĕн тĕштырăсем акмалли çĕрĕн 40—50 процентне яровизациленĕ вăрлăх акса хăвармалла, çĕрулми лартмалли вырăнăн 20—30 процентне яровизациленĕ вăрлăх лартмалла. Çак ĕçе тумашкăн яровизаторсем хатĕрлемелле, кашни колхозрах ĕçе пĕлекен яровизатор пултăр.

Çураки пуçланиччен кашни колхозрах хире улăмран, çумкурăксен тунисенчен тата хăмăлтан тасатмалла. Çак ĕçе уйрăмах тĕплĕн тумалла, ăна обязательнăй йĕркепе тумалла, мĕншĕн тесен нумай колхозсен уйхирĕсенче çумкурăкĕсем нумай шăтса ларнă.

Парти, совет тата çĕрĕç органĕсен çуракинче МТС-семпе колхозсен пур сеялкисемпе те усă курмалла тăвас пулать. Кашни колхоза рядовой сеялка мĕн чухлĕ кирлине халех шута илмелле, вĕсем хăш колхозсенче çук — çавăнта куçармалла, тырăн ытларах пайне рядовой сеялкăсемпе акмалла.

1943 çулта кĕрхи çĕртме тумалли плана, пĕтĕм республика тăрăх илсен, 65,5 процент, уйрăмăн илсен — Кувакино районĕ 29,3 процент, Çĕрпў районĕ 38,8 процент, Чкаловски район 38,1 процент, Пăрачкав районĕ 47,8 процент çеç тултарнă. Çуртырăсем акмалли çĕр лаптăкĕн пысăк пайне çĕнĕрен сухаламалла пулни пире лашасене çуракине ирттерме лайăх хатĕрлеме хушать. Районсемпе колхозсен руководителĕсен лашасем ĕрчетес ыйтупа хăйсен тўрремĕнех ĕçлемелле, лашасене мĕнле пăхса усранине тăтăшах тĕрĕслемелле, вĕсене лайăх пăхса усрама, çитерме кирлĕ мерăсем йышăнас пулать. Пур колхозсенче те мĕнпур лашасем валли кирлĕ чухлех лайăх пахалăхлă утă уйăрмалла, çуракинче ĕçлекен лашасем валли фураж уйăрса хумалла, уйхир ĕçĕсем пуçланиччен вĕсемпе усă курма чармалла.

Лаша кўлмелли хатĕрсене тата транспорт инвентарĕсене халех йĕркене кĕртмелле. Кашни ĕç лашин хăйне юрăхлă хăмăт-ĕнерчĕк пултăр. Конюхсем улшăнса тăрассине пĕтермелле, конюхсене ĕçшĕн лашасене мĕнле пăхса усрани тăрăх тўлемелле тăвас пулать.

Çак сывăх кунсенчех лашасене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетсе памалла, вĕсене хăйсем çумне çирĕплетнĕ лашасемпе çўреме ирĕк пани çинчен калакан удостоверенисем памалла. Пĕтĕ кĕсресене лайăх пăхса усрамалла, пĕр кĕсре те хăм пăрахни ан пултăр. Кĕсресем мĕншĕн хăм пăрахнине тĕрĕслемелле. Ун çинчен колхозниксен пухăвĕсенче, райсовет исполкомĕсен ларăвĕсенче сўтсе-явмалла, айăплисене çирĕп ответ тыттармалла.

Кăçал, лашасен ĕçĕ чылай йывăрланнине шута илсе, майракаллă выльăхсемпе ĕçре анлăн усă курмалла. Республикăри колхозсенче кастарнă вăкăрсем 8.600 пуç ўсеççĕ. Кăçал пирĕн 20.600 вăкăра ĕçлеме вĕрентмелле. Пирĕн çак туртăм вăйне хатĕрлесе, унпа ялхуçалăх ĕçĕнче усă курмалла. Апла пулсан вĕсемпе усă курма кўлмелли хатĕрсем çителĕклĕ тупас пулать. Анчах та пирĕн колхозсенче тĕп туртăм вăйĕ лаша пулать. Çавăнпа та колхозсен, колхозниксен, уйрăмăнах малта пыракан çынсен, лашасене пăхас ĕçе сўрĕклетмелле мар.

Ăмăртура тунă çитĕнўсем

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1943 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тата тракторсемпе тумалли ĕçсен планĕсене пурнăçлассишĕн районсем, МТС-сем тата колхозсем хушшинче пынă социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ ăмăртура çаксем çĕнтернĕ тесе йышăннă, вĕсене вара Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă:

1. Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттернĕшĕн **Вăрнар** районне куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялав памалла тунă тата ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерес ĕçре Етĕрне, Элĕк, Калинино, Шупашкар, Сĕнтĕр, Вăрмар, Советски, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпў тата Шăхасан районĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

2. Выльăх-чĕрлĕх, çав шутра лашасем те, ĕрчетмелли плана пурнăçланăшăн **Элĕк** районне Совнаркомпа Обкомăн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Шăхасан, Ишлей, Çĕрпў, Вăрмар тата Сĕнтĕр районĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

3. Тракторпа тумалли ĕçсен планне ăнăçлăн пурнăçланăшăн **Шăхасан МТС-не** Совнаркомпа Обкомăн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă тата тракторпа тумалли ĕçсен планне пурнăçлас тĕлĕшпе Йĕпрес, Вăрнар, Елчĕк тата Комсомольски МТС-ĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

4. Ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса ирттернĕшĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçланăшăн **Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоза** Совнаркомпа Обкомăн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă тата республикăра пурĕ 61 колхоз лайăх ĕçленĕ тесе йышăннă.

Çуракине хатĕрленес задачăсем

1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Ĕçсынни депутачĕсен Мускав Совечĕн парти тата общество организацийĕсемпе пĕрле туса ирттернĕ чаплă ларăвĕнче Сталин юлташ çапла каларĕ: «Халăх пулăшман пулсан, совет çыннисем фабрикăсемпе заводсенче, шахтăсемпе рудниксенче, транспортра, ялхуçалăхĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлемен пулсан, Хĕрлĕ Çар çак ĕçсене тума пултараймăн пулĕччĕ... Совет Союзĕн хресченĕсем, хăйсен ялхуçалăхне мĕнле строительство çулĕсене колхоз стройĕ çине тăваса малта пыракан ялхуçалăх хуçисем. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хăйсен халăх интересĕсене лайăх йăланса тăнине историйĕнче никăçан пулман пек кăтартса пачĕç. Вĕсем, фронта пулăшас тесе вăй шеллемесĕр ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара тата пирĕн промышленноçа апат-çимĕçпе сырьепе тивĕçтерсе тăраççĕ».

Стадин юлташăн çак сăмахĕсене пурнăçласа, колхоз хресченĕсем 1944 çулта хăйсен ĕçне тата лайăхрах тума тăрăшмалла. Çуракине хатĕрленес ĕçре вăрлăх хатĕрлесси пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Анчах та çураки валли вăрлăхсем хатĕрлес ĕçре пирĕн çитменлĕхсем нумай-ха. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн республикăра тырпул вăрлăхĕсене 90 процент çеç хывнă, çав шутра пăрçа вăрлăхне 62,7 процент, çĕрулми вăрлăхне 85,3 процент, пĕтĕм вăрлăхсене 58,3 процент, кантăр вăрлăхне 86,8 процент, пĕр çул ўсекен куракçен вăрлăхне 27,3 процент, нумай çул хушши ўсекен куракçен вăрлăхне 36,4 процент çеç хывнă.

Вăрнар, Калинино, Красноармейски, Сĕнтĕр, Шупашкар, Шăхасан тата Етĕрне районĕсем тĕштырăсен вăрлăхĕсене пĕтĕмпех хывса çитерсе пулсан, Шăмăршă районĕ хывмалли вăрлăхсен 53,8 процентне, Хĕрлĕ Чутай районĕ 71,8 процент, Пăрачкав районĕ 72 процент, Чкаловски район 77 процент, Кувакино районĕ 81 процент çеç хывнă.

Чылай колхозсенче вăрлăх çитмест пулин те, районсемпе колхозсен руководителĕсем колхозсен запасĕнчи вăрлăхсене мобилизацилемелли ĕçе, çитмен вăрлăхсене пулăшусăрах тупмалли ĕçе организацилемен.

Выльăх апачĕ çитмест тесе колхозсенче вăрлăх ытти ĕçсене усă курни, вăрлăх хушма ĕçсене ĕçлени ... Кашни колхозник хăйĕн хуçалăхĕнче çĕрулми вăрлăхне хатĕрлесе хучăр.

Вăрлăхсене сортлас ĕç тата вĕсен пахалăхне тĕрĕслесе кондицие çитерес ĕç начар пырать. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра запасри вăрлăхсен 65 процентне çеç тĕрĕсленĕ. Йĕпрес, Комсомольски, Красноармейски, Кувакино, Советски тата Сĕнтĕр районĕсенче çак ĕç уйрăмах начар пырать.

Парти, совет, çĕрĕç органĕсен тата колхоз председателĕсен пĕрремĕш задачи — çураки пуçланичченех пĕтĕм вăрлăхсене хывса çитерсе, сортласа кондицие çитересси, вĕсене лайăх сыхламалла.

Пусуçаврăнăш ыйтăвĕсем

Пирĕн ялхуçалăх ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх вăл юлашки çулсенче халиччен тунă пусуçаврăнăш йĕркисене йышлăн пăсни пулать.

Пусуçаврăнăшне пăсни тата тĕрлĕ культурăсене малтан мĕн акнине шута илмесĕр акни, тăпрана çителĕксĕр çемçетни уйсенче çумкурăксем ĕрчесси тата чылай колхозсенче тырпул тухăçлăхĕ чакасси патне илсе пычĕ. Пусуçаврăнăшне уйрăмăнах Чкаловски, Тăвай, Пăрачкав, Кувакино, Шăмăршă, Куславкка, Елчĕк тата ытти чылай районсенче нумай пăснă.

Пусуçаврăнăшне йĕркене кĕртес тата ăна малашне текех пăсассине пĕтерес тĕлĕшпе çĕрĕç тата партипе совет органĕсен татăклă мерăсем йышăнмалла.

Пусуçаврăнăшне пăсни тата пĕрчĕллĕ тырăсемпе ытти культурăсене тĕрĕс мар акни пуринчен ытла нумай çул хушши ўсекен куракçем акса тăвас ĕçе сўрĕклетнипе, вĕсене акмалли çĕр лаптăкĕсене юлашки çулсенче чылай чакарнипе пулать. Республикăра нумай çул хушши ўсекен куракçене акмалли çĕр лаптăкне чакарни пĕрчĕллĕ тырăсене пĕр вырăнтах темиçе çул хушши акса тăвасси патне илсе пырать. Çавна пула вара тырпул тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ пулать. Кунсăр пуçне тата утă сахал пухса илеççĕ, çакă ĕнтĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе питех те йывăрлатать.

Нумай çул хушши ўсекен куракçем акса тăвасси çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Нумай çул хушши ўсекен куракçене акса тăвасси республикăра юлашки çулсенче чакса пыни сисĕнет. Нумай çул хушши ўсекен куракçем акса тăвас ĕçе хакламанни уйрăмăнах клевер вăрлăхĕ акса тăвассинче хытă сисĕнет, ку ĕçе иккĕмĕш вырăна хураççĕ. Вăрлăхлăх куракçене пухса кĕртес тата çапса шĕкĕлчес ĕçе питех те вăраха янине çакăнпа кăна ăнлантарса пама пулать ĕнтĕ. Вăрлăхсем тума уйăрса хăварнă 14.188 гектартан уборка ĕçĕсем пуçланнă тĕле вĕсем 10.710 гектар çинче кăна юлнă. Çакăн пек пулнине нумай районсен тата колхозсен руководителĕсем çанталăк условийĕсем начар пулнипе, клевер начар чечекленнипе тата вăрлăхсăр пулнипе ăнлантарса пама пикенеççĕ, çапла вара хăйсен преступлениллĕ ĕçĕсене витме тăрăшаççĕ.

Нумай çул хушши ўсекен куракçем акса тăвас ĕçе Чăваш республикинчи колхозсен хуçалăхне малалла аталантармашкăн чи кирлĕ пирвайхи задача вырăнне хурса пурнăçа кĕртмелле. Çак сывăх çулсенчех куракçене пусуçаврăнăшĕнче кăтартнă чухлĕ акмалла тата вĕсене сыхласа хăвармалла тăвас пулать. Сывăх вăхăтрах вăрлăхлăх хăварнă куракçене çапса шĕкĕлчесе хумалла. Ку ĕçе вĕсене вăрлăх мĕн чул тухнине пăхмасăрах, кирлĕ пулсан алăпа шĕкĕлчесе, пурнăçа кĕртмелле. Вăрлăхсене кондицие лартмалла тата вĕсемпе çитес çуракинче тĕрĕс усă курмалла.

Тракторсене тата лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕсене юсасси

Çуракине ирттересси тата пĕтĕм ялхуçалăх çулне ăнăçлăн ирттересси тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тĕплĕн те вăхăтра юсанинчен килет.

Республика тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсамалли 1943 çулхи IV-мĕш кварталти плана ирттерсе тултарнă, январьти плана 122 проц. тултарнă, вăл шутран тĕпрен юсас енĕпе 145,3 процент, текущи ремонт тăвас енĕпе 104,9 процент тултарнă.

Анчах та хăшпĕр МТС-сем тракторсене юсас тĕлĕшпе питех те юлса пыраççĕ. Тракторсене юсамалли плана Пăрачкав МТС-ĕ 33,6 процент, Тăвай МТС-ĕ 45 процент, Улатăр МТС-ĕ 46,5 процент, Вăрмар МТС-ĕ 48,9 процент, Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ 52,2 процент çеç тултарнă. Асăннă МТС-сенче тракторсене юсас ĕç çителĕксĕр пыни МТС-сен директорĕсем запаслă пайсене хăйсен мастерскойĕсенчех юсаса çĕнетес тата çĕнĕ пайсем тăвас ĕçе вăхăтра организацилеменнинчен, юсас ĕçре кирлĕ материалсене вырăнтах тупма тăрăшманнинчен, рабочисем валли культурăпа йăла условийĕсем туса паманнинчен тата юсас тĕлĕшпе ĕçлекен кадрсене тракторсене юсас ĕçе хăвăрт та пысăк пахалăхпа вĕçлессишĕн кĕрешме мобилизацилеменнинчен килнĕ.

Тракторсене юсанипе пĕрлех тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли тата лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕсене юссасине те организацилемелле. Уйрăмăнах тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене лайăх пахалăхпа юсасси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли кашни сеялкăна, плуга е культиватора, çавăн пекех лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарьне те, юсанă хыççăн актпа йышăнмалла.

Çĕрĕç тата партипе совет органĕсен халех колхозсенче ялхуçалăх инвентарĕсене мĕнле пăхса усранине тĕрĕслесе тухмалла, запас пайсем мĕн чухлĕ пулнине шута илмелле тата запас пайсене колхозсенчи мастерскойсемпе тимĕрçĕ лаççисенче тăвассине организацилемелле. Тимĕрçĕсем çук колхозсене ялхуçалăх машинисемпе инвентаре юсама тимĕрçĕ лаççисем пур колхозсем çумне çирĕплетмелле, тимĕрçĕ лаççисенче 3—5 çынна тимĕрçĕ ĕçне вĕрентессине организацилемелле. Ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн предприятийĕсенчи тимĕрçĕ цехĕсемпе анлăн усă курмалла.

Лашасене çураки валли хатĕрлесси

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче лашасем ĕрчетес ĕç питех те пысăк вырăнта тăрать. Анчах та пирĕн ку ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. 1944 çулта январĕн 1-мĕшĕ тĕлне лашасем ĕрчетмелли плана пурĕ те 91,8 процент çеç тултарнă. Сĕнтĕр, Элĕк, Калинино тата Ишлей районĕсем лашасем ĕрчетмелли плана тултарса, вĕсен хисепне ўстернĕ пулсан, Улатăр, Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă районĕсем вара лашасем ĕрчетмелли плана пурĕ те 77—80-шар процент çеç тултарнă. 1943 çулта тихасем пăхса ўстермелли плана та 81 процент чухлĕ çеç тултарнă.

Лашасен ĕçĕ йывăрланнине кура тăркачах, нумай районсен тата колхозсен руководителĕсем вĕсене лайăхрах пăхса усрама тăрăшмаççĕ. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче кăларнă постановленине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе питех те сўрĕк ĕçлеççĕ, тĕрĕссипе илсен, вăл постановленине пурнăçа кĕртмен.

Пирĕн çакна шута илес пулать:

Колхозри ĕçе планласси тата ĕçе организацилесси

Çуракине хăвăрт та лайăх ирттересси, ĕç тухăçлăхне ўстересси ĕçе тĕрĕс организациленинчен килет. Колхозсен, бригадăсен тата звеносен ĕç планĕсене пур тĕлĕшпе те тĕплĕн шутласа, тĕрĕс тумалла.

Колхоз ĕçне организацилес тĕлĕшпе çирĕп йĕркелĕх тăвассине ялан ĕçлекен бригадăсене çирĕплетсе пырассинчен пуçăнмалла. Уйхир ĕçĕнчи кашни бригадăра ĕçсем мĕнле тăнине, вăл хăйĕн задачисене мĕнле пурнăçа кĕртме пултарнине, унта вăйсемпе ĕç хатĕрĕсем мĕн таран çителĕклине, опытлă сухаçăсемпе акакансем пуррине тĕрĕслесе пĕлмелле. Ĕç вăйĕпе ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ таран çук бригадăсене хальхи вăхăтра иккĕмĕш черетре тăракан ĕçсенчи çынсене ямалла.

Бригадăсене производствăллă заданисем панă чухне тата ĕç планĕсене тунă чухне бригадăсем çумне туртăм вăйĕ, ялхуçалăх машинисемпе инвентарь çирĕплетсе памалла. Ĕç планĕнче хăш участокра мĕнле культура акмаллине, вăл участоксенче мĕнле ĕçсем туса ирттермеллине тата мĕн чухлĕ туртăм вăйĕ, миçе колхозник ĕçлемеллине палăртмалла. Кашни колхозник çураки вăхăтĕнче хăйĕн мĕнле ĕç тумаллине пĕлсе тăтăр. Кашни звено çумне уйрăм культурăсем тата акмалли çĕр лаптăкĕсем çирĕплетес пулать.

Районсенчи организацисен тата çĕрĕç органĕсен ĕç дисциплинине çирĕплетесси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла, ĕçе пур колхозниксемпе колхозницăсене те явăçтарса, кашни колхозник нормăна тултарса ĕçлекен тăвас пултаь.

Калас пулать, районсенчи организацисем ĕç нормисене тăвасси çине пурте кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕха. Чылай колхозсенче кивĕ нормăсемпе усă кураççĕ, вĕсене икĕ-виçĕ çул хушши ĕнтĕ пăхса тухман. Вăл нормăсенче пур ĕçсене те палăртман. Республикăри колхозсенче нормăсене пăхса тухса, 1944 çул валли çĕнĕ нормăсем йышăнмалла. Çĕнĕ нормăсем тунă чухне иртнĕ çулсенчи ĕç опытне шута илес пулать, çĕнĕ нормăсене колхозсенчи мĕнпур ĕçсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçа кĕртес ĕмĕтпе тумалла. Çĕрĕç тата партипе совет органĕсен çĕнĕ нормăсем тума колхозсене пулăшмалла. Çав нормăсене колхозниксен пĕрлешўллĕ пухăвĕнче çирĕплетмелле.

Кадрсем хатĕрлесси

Вăрçă условийĕсенче, чылай работниксем Хĕрлĕ Çара кайнине пула, колхоз кадрĕсемпе механизаторла кадрсен составĕ чылай çĕнелчĕ. Колхозсене, МТС-сене ертсе пырас ĕçе опыт сахал, çĕнĕ çынсем, пуринчен ытла хĕрарăмсем хутшăнчĕç. Колхоз ĕçĕсене лайăх туса пырасси ăна ертсе пынинчен нумай килет.

Колхозри мĕнпур работниксене, председательтен пуçласа звеноводсем патне çитиччен, пĕтĕмпех вĕренĕве явăçтармалла, вĕсене ялхуçалăх ĕçĕсене пĕлекен çынсем пулма вĕрентмелле. Колхоз председателĕ пысăк хуçалăха ертсе пырас ĕçри организациллĕ ыйтусемпе паллашма, артеле ертсе пырас техникăна алла илме, колхоз правленийĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемелли меслетсене пĕлме тивĕçлĕ. Колхоз председательне курссенче организаторла пĕлўпе хĕçпăшаллантармалла. Вăл курсран государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли виçесене тата йĕркесемпе срoксене, колхозсемпе МТС-сем хушшинчи çыхăну мĕнле пулмаллине, производствăпа ĕç планĕсене, приходпа расход сметисене мĕнле тумаллине тата учетпа отчет ĕçне мĕнле йĕркелемеллине пĕлсе таврăнмалла. Кадрсем хатĕрлес ĕçе ялан туса пымалла. Вĕренекенсене лайăх пĕлў памалла. Пур колхозсем те лайăх ĕçлеччĕр тесен, пирĕн темиçе çĕр, темиçе пин колхознике вĕрентмелле. Сухаçăсемпе акакансене, яровизаторсемпе химизаторсене, техникăллă культурăсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звеносене ертсе пыракансене вĕрентсе хатĕрлемелле. Вĕсен ĕçри квалификацине ўстермелле, вĕсене социализмлă çĕрĕç мастерĕсен опычĕпе хĕçпăшаллантармалла.

1944 çулта социализмлă çĕр ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнўсем тăвассишĕн

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче колхоз стройĕн вăйĕпе çирĕплĕхĕ уйрăмах хытă палăрчĕç, общество интересĕсене ял историйĕнче пулман пек лайăх пĕлсе тăни палăрчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем политика ыйтăвĕсемпе, пирĕн çĕршыври тата тĕнчери лару-тăрупа нумай ытларах интересленме пуçларĕç. Колхозлă ял отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи ĕçсене тимлĕн сăнаса тăрать, паттăр Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе пыни çинчен калакан хыпарсене çав тери савăнса итлет.

Ялти коммунистсемпе партире тăман большевиксен çакна лайăх ăса туса тăмалла: отечественнăй вăрçă условийĕсенче, колхозлă ялта питĕ йышлă çамрăк кадрсене колхоза ертсе пырас ĕçе лартнă вăхăтра, вăрçă пирки колхозсем умĕнче пысăк йывăрлăхсем тăнă вăхăтра, политикăллă-массăллă агитаци ĕçне куллен туса пыни уйрăмах кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Ялта пирĕн парти организацийĕсен политика ĕçĕнче пур майсемпе те — хаçатсемпе, радиопа, докладсемпе, лекцисемпе, калаçусемпе, хаçатсем вуланипе тата политпросвет учрежденийĕсемпе усă курас пулать. Пур колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче те ĕçлемелле. Парти организацийĕсен агитаципе пропаганда ĕçне мĕнпур коммунистсене, комсомолецсене тата ялти интеллигенцие явăçтармалла.

Колхозниксем хушшинче туса пыракан массăллă-политикăллă ĕçре ялти политпросвет учрежденийĕсем пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Парти райкомĕсен, пуçламĕш парторганизацисен, вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсен тата библиотекăсен ĕçĕсене тĕпренех лайăхлатмалла.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен колхоз массисене вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешме мобилизацилемелле. Ыттисене хăйсен опычĕпе паллаштарса, 1944 çулта социализмлă çĕрĕçĕнче халиччен пулман пек пысăк çитĕнўсем тунă çулталăк, нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă çулталăк туса хумалла.

Сывă пулччăр колхоз хресченĕсем!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн тăван çулпуç, учитель, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00556. Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.